# <u>Туй сăмахлăхĕ</u>

## Тупкăч шахвăртни

Евче килнĕ çын — тупкăч — хĕр тăванĕсемпе вăлтса-шахвăртса калаçать. Паллах, калаçу тĕрлĕ йĕрпе кайма пултарать, анчах унăн çирĕпленнĕ çаврисем пур. Тĕслĕхе пуçламăш çавринс вуласа пăхăпăр.

— Аван пурăнатăр-и, хаклă çынсем? Пурте йĕркеллех çӳреççĕ-и?

— Çӳретпĕр-ха ерипен... Эсĕ ху мĕн çăмăлпа çак?

— Эпĕ пĕр сăлтавпа килсеттĕм те сирĕн пата, калаçма вăхăт тупăнмĕ-ши?

— Ырă çынпа калаçма та вăхăт тупăнмасан...

— Пирĕн хуçан хĕл каçнă вăкăрĕ каç-каç çухалкаласа çӳрет те... Сирĕн урамра йĕрĕ пур тенине илтнĕччĕ. Чăнах-ши вăл, калаймăр-и?

— Ку тăкăрлăкра ют ĕне выльăх çӳренине асăрхаман. Эпир килте çук чухне çӳренĕ пулинех...

— Сирĕн пушмак пăру пур, теççĕ. Çавăнпа йĕр ӳкет пулĕ-ха. Сутмаççĕ-ши ку килте пушмак пăрăвне тесе килсеттĕм те...

— Выльăх-чĕрлĕх сутасси пирки шарламанччĕ-ха. Шухăш та пулман. Ют выльăх ернине те сисмен.

— Тен, сирĕн Илемпи пĕлмест-и? Вăл каç-каç кĕтĕве хирĕç тухаканччĕ.

— Ара, хăш ял пăрăвĕ çухалнă тетĕн çак? Камсен пулать-ха) вăл?

— Кĕçĕн Сĕнтĕрти Уртем Микихверĕсен Кеваркин вăкăрĕ тетĕп-çке...

— Ăнлантăм, ăнлантăм... Илтнĕччĕ-çке амутке! Пăх-ха, пуçа та пырса кĕмен! Пĕлтĕр салтакран килнĕ Илтер пирки калаçатăн вĕт эсĕ, тупкăч-юпкăч!

— Çавăн пирки пулмасăр, çавă ĕнтĕ, çавă! Пушмак пăрăвăра тем хака сутас тетĕр ĕнтĕ? Пирĕн хуçа турткаланса тăрас шутлă мар.

— Итле-ха, хисеплĕ çыннăм, халĕ ĕлĕкхи мар. Хулăм укçи пирки калаçас та çук. Чĕнер-ха Илемпие, хăй мĕн калать...

Пĕр чухне малалли калаçу та «пушмак пăру» çинчен пыма пултарать, ытларах чухне тупкăчпа хĕр тăванĕсем пĕр-пĕрне ăнланса илнĕ хыççăн уççăнах калаçаççĕ.

**Кĕçĕн кĕрӳсен йыхравĕ**

Туй пуçланмалли кун ирхине юланутлă кĕçĕн кĕрӳсем ял тăрăх туя йыхăрса çаврăнаççĕ.

— Эй, тăвансем, ялйышсем! Паян туя каймалла! Туя, туя, туя каймалла! Туй тесен, тукмак йăваннă, выртан каска хускалнă! Чашăк-тирĕк тапраннă, катка-пичке янранă!

Эй, тăвансем, ялйышсем! Туй арĕсем, арăмсем! Лаша кӳлсе тапранăр! Ватă картсем[1], карчăксем! Туя тытса тапра-нăр! Ураланман ачасем! Аркă вĕçрен çакланăр! Пурте туя каймалла, туй мыскари курмалла!

Эй, тăвансем, ялйышсем! Кам утаймасть — утланăр, кам чупаймасть — çăкланăр! Така çуккин — такана, лаша çуккин — лаххана, укçа çуккин — урçана, ача çуккин — арчана! Пурте туя каймалла!

**Каччин пуçтайĕ**

Пуçтай тесе аслă çынсенчен пил ыйтнине е сывпуллашнă чухнехи сăмаха калаççĕ. Авал чăваш яш-кĕрĕмĕ тăван килйышран пуçтай сăмахĕсĕр уйрăлман.

— Асатте-асаннесем, кукамай-кукаçисем! Атте-аннесем! Ман ума аслă çул выртрĕ, татăклă сăмах калама вăхăт çитрĕ.

---

[1] Картсем - ват  сеæстариксем.

Ырлăхлă ĕç пуçлас терĕмĕр, атте-анне, пехиллĕр мана çав пысăк ĕçе пуçăнма. Эсир мана мĕн пĕчĕкрен кăкăр сĕчĕпе, алă ачашĕпе юратса ӳстертĕр, таса кипкепе чĕркесе çӳрерĕр. Эсир мана мĕн ачаран мăн маçаксен чĕлхине вĕрентрĕр, хама кура ăнкармалăх чăнпа тăн патăр, çын турăр. Эсир мана мĕн хăвăр ĕçленĕ пек ĕçе хăнăхтартăр, ял çинче ырă ят патăр, халĕ тата мăшăрлантарма шухăшларăр.

Асран кайми атте-анне, халĕ ĕнтĕ пиллесе ярăр мана, эпĕ сирĕнтен уйрăлатăп. Эпĕ сирĕнтен халăх йĕркипе уйрăлатăп, уйрăлатăп эсир çĕлесе парас кĕпе-йĕмрен, эсир пĕçерсе парас апат-çимĕçрен, анчах сирĕн ятран-шывран, сирĕн пурнăçăртан эпĕ уйрăлмастăп.

Ача-пăча амăшĕнчен ыйтать, Тăван çĕршыв салтакран ыйтать. Пурнăç йĕркеллĕ пулсан, малашне сире мĕн кирлине ыйтмасăрах хамăрăн туса памалла пултăрччĕ.

Тав тăватăп сире, атте-анне, пил ыйтатăп.

## Мăн кĕрӳ сăмахĕ

«Мăн кĕрӳ сăмахĕ (такмакĕ)»— чăваш халăхĕн анлă сарăлнă калуллă-юрăллă туй хайлавĕ. Вăл хăйĕн шухăшĕпе, тытăмĕпе, сăнарлăхĕпе тата чĕлхе пуянлăхĕпе тăван халăхăн авалхи пурнăçĕн паллисене кăтартса тăрать. Ахальтен мар тĕпчевçĕсем ăна халăх эпосĕн упранса юлнă пĕр тĕпренчĕкĕ теççĕ.

Мăн кĕрӳ сăмахĕн тĕслĕхĕсем нумай, вăрăм. Ăста юрăççем вĕсене икĕ-виçĕ эрне таран такмакласа-каласа çӳренĕ. Çав вăрăм хайлавăн пĕр пайне — халăха, çĕршыва, харкам çынсене саламласа каланă пайне — саламалик теме йышăннă. Саламалик уйрăм сыпăксенчен тăрать. Юраçă вĕ-сене тĕрлĕ вăхăтра хăйне кирлĕ пек туллин е кĕскен калама пултарать.

Чăваш саламаликĕ тĕрĕк халăхĕсен паттăрла эпосĕсемпе (пушкăртсен «Урал паттăр», алтайсен «Маадай-кара», казахсен

«Каплантӑ паттӑр», кӑр-кӑссен «Манас», узбексен «Алпамӑш», якутсен «Олонхо» хайлавӗсемпе) пӗр кӗвӗллӗ пулни курӑнать. Вӑл авалхи паттӑрлӑх халапӗсене, асамлӑх тата паттӑрлӑх юмахӗсене ҫывӑх. Вӗсенче пуринче те пулма пултарайман ӗҫсене чӑн пулнӑ пек каласа параҫҫӗ, пӗр ытарлӑха тепӗр ытарлӑхпа сыпӑнтарса пыраҫҫӗ.

Мӑн кӗрӳ сӑмахӗ туй йӗркине тытса пыма, халӑха сӑмах илемӗпе, пин-пин кӗвӗпе савӑнтарма, шахвӑртса каланӑ сӑмах урлӑ ӑс пама кирлӗ.

Мӑн кӗрӳ сӑмахӗ илемлӗх мелӗсемпе пуян. Ҫавӑнпа вӑл чӑваш туйӗсенче халӗ те тӑтӑшах илтӗнет. Юлашки вӑхӑтра чӑваш туйне, мӑн кӗрӳ сӑмахне фольклор фестивалӗсенче, радиопа телекурӑм тӑтӑшах кӑтартма пуҫларӗҫ.

**Мӑн кӗрӳ йыхравӗ**

Салам сире, тав сире!
Алӑк уҫсан курӑнатӑра,
Тирпейлӗ-йӗркеллӗ пурӑнатӑра?
*(Тарапҫӑ халӑх: «Сиккипех, пыл та ҫу!»)*
Тавах эппин, тус-тантӑш,
Хӑта, тӑхлач, хурӑнташ!
Ватти пур, ҫамрӑкки пур,
Арӗ пур, арӑмӗ пур,
Килен пур, каян пур,
Атьӑр пирӗнпе туя!
Урапа утан, сӑмсапа сывлан,
Кутпа шӑван — мӗнпур тӑван!
Хушпу пурри, хушпу тӑхӑнӑр,
Хушпу ҫукки — кӑшкар тӑхӑнӑр,
Сар пурри сар ҫакӑр,
Сар ҫукки — хупах ҫакӑр,
Сурпан пурри сурпан сырӑр,

Сурпан çукки — тăла авăрăр!
Ача пурри ача çĕклĕр,
Ача çукки тукмак çĕклĕр,
Пнт-куçа çуса, пиçиххи çыхăр та
Атьăр пирĕнпе туя!
Пирĕн Ахмантей ывăл авлантарать,
Илмемет хăта хĕр парать.
Айт! тесен алтăр пулать,
Хайт! тесен хатĕр пулать.
Ыран та мар, паян та мар,
Халĕ тесен çак халех
Атьăр пурте пирĕн туя!

**Саламалик**

**Хĕр килĕ умĕнче калани**

Эй, саламалик, тав сăя!
Ĕçетре-çиетре, вылятра-кулатра,
Авалхи пек тăратра,
Çĕнĕрен йăла кăлармастра,
Пире хуш курса хапăл тăватра?
Хапăл тăватăр пулсан, виç утăм малалла,
Хапăл тумастăр пулсан, виç утăм каялла.
Хапăл-и, хăтасем, тăхлачсем?
*(Хĕр ашшĕ-амăшĕ: «Хапăл, хапăл! Пиртен ирĕк!)*
Сиртен ирĕк пулсассăн,
Эпĕ ачасене çаварса кăтартас тетĕп.
Халь пĕрре çаваратăп та вара иккĕ çаваратăп.
Мăн кĕрӳ ушкăнĕ хĕвеле май çаврăнать, вăл вăхăтра туй халăхĕ пĕр çавра юрă юрлать.
Хапăл тăватăр пулсан,

Пĕр аллăрта пыл пултăр,

Пĕр аллăрта çу пултăр.

Мăн кĕрӳ ушкăнне çăкăр-тăварпа чыслаççĕ, çав вăхăтра кĕçĕн керӳсем хĕрçумсене хапха уçтарасшăн ăмăртаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ, туптармăшсем калаççĕ.

**Хăта килкартинче калани**

Çак хăтасен картиш пит пысăк иккен:

Тăршшĕ тăхăрвунă хăлаç,

Сарлакăшĕ сакăрвун хăлаç,

Урлăш утмăл хăлаç.

Тăхăрвунă хăлаç тăршшĕнче

Тăхăрвун тăхăр юпи пур,

Сакăрвун сакăр кăшăл пур,

Утмăл ултă унки пур,

Ут кăкарма хатĕрлесе хунă.

Çав утмăл ултăункăран пĕр унки

Пирĕн супса килнĕ утсене

Кăкарса кантармашкăн пулмĕ-ши?

Эпĕ ыйтмастăп — пирĕн ача ыйтать.

Эпир кăна мар,

Вĕçсе пыракан ăмăрткайăк та

Хăват хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе

Уртăш йывăççи çине ларса канать.

*(Тарапçă халăх: «Пиртен пулсан, чару çук!*

*Кăкарса кантарăр!)*

Итлес-и-мĕн сирĕн сăмахăра?

Чунăм чухлĕ куратăп кăмăлăра.

Çитмĕл те çичĕ тинĕс уттипе,

Çитмĕл çухрăм çеçенхир хушшипе,

Утмăл çухрăм сĕм вăрман варрипе,

Урлă-пирлĕ çулсемпе килтĕмĕр эпир сирĕн пата.
Сĕм вăрман витĕр тухнă чух
Утмăл ултă упа ури куртăмăр,
Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçнă чух
Хĕрĕх те пĕр хĕрхи чĕрни куртăмăр.
Çеçенхирте — пăлан йĕрĕ,
Сĕм вăрманта — упа йĕрĕ,
Вăрман хĕрринче — кашкăр йĕрĕ,
Тарăн çырмара — тилĕ йĕрĕ,
Аслă урамра — хĕр йĕрĕ,
Çавсен йĕрĕпе килтĕмĕр.
Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçнă чух
Вуникĕ мăйракаллă пăлан кайăк
Пирĕн куçа курăнчĕ.
Унăн мăйракисем ылтăн,
Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
Хўри вĕçĕсем çут кăлкан,
Тĕкĕ-çăмĕсем сар ука,
Мăйракипе пĕлĕте перĕнет,
Урипе çĕре перĕнмест.
Мăйракипе шăйăрать те
Тем вăрăмăш йĕр тăвать,
Чĕрнипеле пусать те
Пире кайма çул тăвать,
Хўри вĕçĕпе шăлса якатать,
Çавăн çулĕпе килтĕмĕр, хăта.
Çитмĕл çухрăм çеçенхир урлă каçсассăн,
Куçпа виçсе илейми,
Кайăк вĕçсе çитейми
Калама çук çўллĕ ту куртăмăр:

Урлăшĕ — утмăл çухрăм,

Çӳллĕшĕ — çитмĕл çухрăм,

Сарлакăшĕ сакăрвун çухрăм,

Тăршшĕ тăхăрвун çухрăм,

Тăвĕ хĕвелпе йăлтăртатать,

Сивĕ çилпе шăлтăртатать.

Çав *çӳллĕ* ту çинче эпир

Хура çĕлен куртăмăр,

Çавна хăпарса тытрăмăр.

*Çуллĕ* тусем *çуллĕ* пулчĕç,

Хăпармашкăн йывăр пулчĕç.

Виçĕ кун та виçĕ каç

Хăпартăмăр çав ту çине.

Хура çĕлене вĕлертĕмĕр,

Хура тирне сӳтертĕмĕр,

Хура шĕлепке çаптартăмăр.

Хура шĕлепке хĕррисене

Вуникшер ярапа яртартăмăр.

Вуникĕ ярапа тăррисене

Вуникĕ пус нухрат çактартăмăр.

Вуникĕ пус нухрат — куç çути,

Пирĕн ача — сирĕн кун çути,

Сирĕн хĕрĕр — пирĕн чун çути,

Çавсен тивлечепе килтĕмĕр.

Эй, хăтасем, тăхлачсем,

Тĕрĕс-и çак сăмахсем?

**Хăта çуртĕнче калани**

Пирĕн туй халăхне кĕрсе савăнма

Çакă хăтан çурчĕ пит пысăк иккен

Пирĕн хăта çак çурта çавăрма

Çĕр çитмĕл пĕрене кастарнă,
Çĕр çĕклейми шур пўрт ларттарнă
Çĕр çĕклейми шурă пўрт çине
Пў çитерсе пўс вĭттернĕ,
Чун çитерсе чус виттернĕ,
Вăй çитерсе шуç виттернĕ,
Симĕс кăвакпа сăрлаттарнă.
Симĕспе кăвак илемне
Чăпар кайăк иленнĕ.
Чăпар кайăкĕ кил сыхлать,
Сарă тулă хыпать, шыв сыпать.
Çакă пирĕн хăта мĕн тăвать?
Шурă сахăр хыпать, сим сыпать,
Çавă симне тутанма
Паянхи кун туй пуçлать.
Илмемет хăта пўрчĕ тăрринче
Ама кайăк авăтать,
Ахмантей хăта пўрчĕ тăрринче
Аçа кайăк авăтать.
Эпир çав кайăксен вăййипе
Çакăнта тухса килтĕмĕр.
Мĕншĕн авăтаççĕ-ши çав кайăксем?
*(Туй халăхĕ: «Иккен пĕрле*
*Пĕр йăвара пурăнасшăн пуль!»)*
Çак хăтасен пўрчĕ пит пысăк иккен,
Тултан пăхрăмăр — сакăр кĕтеслĕ,
Шала кĕтĕмср — тăватă кĕтеслĕ.
Çакă пўрте кĕрсессĕн,
Тăхăрвун тăхăр урай хăми пур.
Çав тăхăрвун тăхăр хăминчен

Пĕр хăмине пирĕн туй халăхне
Авалхи йăлапа выляса кулма
Ирĕк памăр-ши, хăта-тăхлачсем?
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр,
Ĕлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Эпир анчах мар,
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Çеçенхирте шевле те вылять.
*(Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк!»)*
Çакă хăтан пӳртĕнче
Сарă сăрпа сăрланă,
Саваласа якатнă
Сакăрвун сакăр сакки пур,
Сакки çинче сарми пур.
Çав сакăрвун сакăр саккинчен пĕр сакки
Пире ларса савăнма пулмĕ-ши?
Эпĕ ыйтмастăп —
Пирĕн ача ыйтать.
Эпир анчах мар,
Турă хушнипе, пӳлĕх пӳрнипе
Çунатлă ăмăрткайăк та
Турат вĕçне ларса канать.
*(Туй халăхĕ: «Пиртен чару çук! Ирĕк!»)*
Çакă хăтан урай варринче
Улт уралллă сĕтелĕ пур иккен,
Улт уралллă сĕтелĕ çинче
Пĕр пуçĕнче пыл-шерпет ларать,
Тепĕр пуçĕнче сирсе сирĕлми сим ларать.
Симпылпа шерпет хушшинче
Ылтан тирĕк ларать.

Ылтăн тирĕк çинче
Кĕмĕл çурхат вылять,
Кĕмĕл çурхатра сим вылять,
Пирĕн алăра хер вылять.
Пире те çавăн пек выляса-кулса
Авалхи йăлапа туй туса ирттерме
Ирĕк пулмĕ-ши, хăта-тăхлачсем?

**Саламалике вĕçлесе калани**
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр,
Ёлĕкхи йăлана пăрахмастпăр.
Пылак чĕлхене пыл çитмен, тет,
Сăсар тирне шыв витмен, тет,
Тав сире, тайма пуçăм сире.
Кайăк кăвакарчăнăн сĕчĕ çук,
Юханшывăн тăни çук,
Ут чĕлхенĕн шăмми çук,
Чăн сăмахăн суйи çук,
Сиртен савнă çынсем çук.
Сумасăр мулне патăмăр,
Виçмесер пылне патăмăр,
Сире сăмах витес çук,
Урăх калас сăмах çук,
Сиртен хаклă çынсем çук.
Эй, хăтасем, тăхлачсем,
Тулчĕç-и кăмăлăрсем?
Ытла каланине каçарăр,
Сахал каланине çитерĕр,
Çитменнине хăвар саплаштарăр.
Аллăмри куркапа тав сире,

Хĕтасем, тăхлачсем,

Хурăнташ-тăвансем!

Ватта — пуç, çамрăка — тав!

Тав сире!

### Туй халăхĕн юрри

Ар туйне хутшăнакан çынсене туй халăхĕ теççĕ. Туй халăх юррине мăн кĕрÿ пуçласа парать. Кирек ăçта пырсан та, вăл малтан кĕске е вăрăм саламалик калать, халăха савăнма ирĕк ыйтса илет.

Каччă килĕнче мăн кĕрÿ такмакĕ те, туй халăх юрри те мĕске пулать, хĕта килĕнче вара вĕсем сехечĕ-сехечĕпе тăсăлма пултараççĕ.

### Хĕр илме кайиччен юрлани

М ă н к ĕ р ÿ:

Мĕншĕн юрламастăр, туй ачисем,

Сирĕн юрлассăра кам пĕлмест?

Йăпататăр япшар чĕлхĕрсемпе,

Йĕс шăнкăрав сассăр илтĕнмест!

Ту й х а л ă х ĕ:

Пирĕн ача маттур, ай, Якку пур,

Пирĕн ача маттур Якку пур,

Çураçнă хĕр чипер Анна пур.

Мĕншĕн каяс Ишек мăн пасарне,

Мĕншĕн каяс Ишек пасарне,

Сарă çу пек çÿпçе илмесен?

Мĕншĕн ÿсес маттур йĕкет пулса,

Мĕншĕн ÿсес маттур çын пулса,

Хамăр савнисене илмесен?

Алăк умĕнчи улма, ай, йывăççи,

Улмийĕсем çук-тăк, мĕн усси?

Урпа ăсли туса, хăмла ярса,

Юрламасăр ĕçни мĕн усси?

Хамăр тупнă савни, ай, чун уççи,

Юратасси çук-тăк, мĕн усси?

Хулăм укçи парса, евчĕ ярса,

Юратмасăр илни мĕн усси?

Шап-шур иккен çырлан, ай, çеçкисем

Сăр шывĕпе Сĕве хушшинче.

Пурах иккен тĕнчен илемĕсем

Ырлăхпала хурлăх хушшинче.

Вуниккĕн те тăрса, ай, ут çулсан,

Кӳмĕпĕр-ши çаран илемне?

Пурте харăс тăрса, ай, юрласан,

Кӳмĕпĕр-ши туйăн илемне?

Хĕрĕхĕн каятпăр, ай, хср илме, Хĕрĕхĕн каятпăр хĕр илме, Хĕрĕх пĕрĕн пулса килĕпĕр. Эпир сăмах татнă сарă хĕре., Хамăр сăмах татнă сар хĕре Ют каччă мар, хамăр илĕпĕр.

Кăвак лашасене, ай, кӳлер-и,

Хӳрисене çавăрса тӳлер-и?

Ваттисене вырăна, ай, лартар-и,

Ик уринчен тытса тайлар-и?

Сылтăмминчен тытса, ай, тайăлсан,

Укçа ыйтать тесе ан калăр;

Сулахайĕнчен тытса, ай, тайăлсан,

Сума сумасть тесе ан калăр.

**Хĕр килĕнче юрлани**

Ар туйĕ хапха умне пырса тăрсан, мăн кĕрӳ вăрăм такмакне пĕтĕмпех калать. Вăл каланă хушăра кеçĕн кĕрӳсем хапха уçтараççĕ. Мăн кĕрӳ хăй такмак каланă вăхăтра туй халăхне юрлаттарса, ташлаттарса илет. Унтан килкартинче çапла калать:

Туй ачисем, каччăсем,

Туй арăмсем, сар хĕрсем!

Пыл-шерпетле калаçса,

Йăл-йăл кулса-выляса

Туй ирттерсе ямалла.

Сирте ирĕк, туй халăх!

**Туй халăхĕ юрă пуçлани**

Шăнкăр кăна шăнкăр, ай, килтĕмер,

Тĕрлĕрен те курăк тĕпретсе.

Тĕпĕр кăна тĕпĕр, ай, килтĕмĕр,

Аслă урамсене кисретсе.

Чие кăна чие, ай, теееçĕ,

Чие авринченех пĕкĕ аваççĕ.

Пĕккийĕсем çинçе пулсан та,

Çавах чие пĕкки теееççĕ.

Пире чухăн та чухăн, ай, теееçĕ,

Чухăн пулсан та, çынсем саваççĕ.

Эпир хамăр чухăн, ай, пулсан та,

Ратнийĕсем пуян тееççе.

Чăпар куккук ятăмăр пахчана

Панулми çеçкисене суйлама.

Хĕрĕх лавпа килтĕмĕр çак яла

Хамăр савнă хĕрсене суйлама.

Çупкăм кăна çупкăм, ай, çĕр çырли,

Пирĕн ача татса çиесшĕн.

Ушкăн кăна ушкăн, ай, сарă хĕр,

Пирсн ача кĕрсе вылясшăн.

**Хĕрпе таврăнсан юрлани**

«Иăран тăпăлтарса», «таянчăк тыттарса» пĕтернĕ хыççăн мăн кĕрӳ хĕрпе каччăна, туй халăхне пӳртс илсе кĕрет.

М ă н  к ĕ р ӳ: Хисеплĕ тăвансем, картсемпе карчăксем!

Курка тытăр аллăра, хăват пултăр хăвăра!

Тинкерĕр-ха кунталла, мăн кĕреке тавралла: Эпир сире валли кин туянса килтĕмĕр!

Туй халăхĕ:

Хĕрехĕн кайрăмăр хĕр илме,
Хĕрĕх пĕрĕн пулса килтĕмĕр.
Памăпăр, памăпăр терĕç те,
Çапах та илсе килтĕмĕр.
Пиччеçĕм, пиччеçĕм Кеварки,
Урусем айне пукан ларт,
Чавсусем айне минтер хур.
Çамрăк кин мĕнле иккенне
Икĕ куç тулли пăхса лар.
Инкеçĕм, инкеçĕм Ульчана,
Аллусем çине парне ил,
Курăнан вырăна çакса хур.
Çамрăк кин ăста иккенне
Икĕ куç тулли пăхса лар.

**Вайкил уйăрни**

Шилĕк умĕнче хĕр туйĕпе ар туйĕ тĕл пулнă хыççăн малтан шапаççене*сăмах параççĕ. Вĕсем шӳтлĕ-камитлĕ сăмахсемпе туй халăхĕсене пер-пĕринпе паллаштараççĕ, хĕрпе каччăна ятарласа çак ятпа хывнă сăвă е юрă парне-леççĕ. Çавна шапаç сăвă калани теççĕ. Ун хыççăн вăйкил уйăрма тытăнаççĕ. Вăйкил уйăрни —ар туйĕпе хĕр туйĕ пĕр-пĕринпе ăмăртса юрлани. Ăмăрту е мухтас, е хурлас йĕрпе кайма пултарать. Виртлесе ăмăртнин тĕслĕхĕпе паллашăпăр.

Х ĕ р т у й ĕ: Хура кăна сысна, ай, хушка пуç,
Пирĕн Якку йысна та кукша пуç.
Хура сысна кĕççи хуртланнă,
Якку йысна пуçĕ пыйтланнă.

А р т у й ӗ: Ай-хай инке Анна пур,
Тылламан сӳс пуҫӗ пур.
Хура пуҫӗ курнасран
Шур пӗркенчӗк хуртарнӑ.
Хура мӑйӗ курнасран
Шӑрҫа ҫакса тултарнӑ.
Хӗр туйӗ: Арпалӑхри тӑмана
Ҫӳп-ҫап чавса ларать-ҫке.
Кӗрекери ҫӗн йысна
Пуҫне чиксе ларать-ҫке.
Йысна ӗҫкӗҫ пулмалла,
Мухмӑр куҫне уҫаймасть.
Армак-чармак куҫӗпе
Халӑх ҫине пӑхаймасть.
А р т у й ӗ: Атте лаши — тур лаша,
Суха тума тухсассӑн,
Касӑ тытма пӗлмерӗ,
Туя кайма тухсассӑн,
Ҫула тытма пӗлмерӗ.
Якку тантӑш, тамаша,
Вӑйӑ хӗрне тухсассӑн,
Хӗр суйлама пӗлмерӗ.
Авлантарма тӑрсассӑн,
Савнӑ хӗре илмерӗ.

*Туй сӑмахлӑхӗ // Чӑваш литератури : учебник-хрестомати : VIII класс валли / В. П. Никитинпа В. Е. Цыфаркин пухса хатӗрленӗ. - Шупашкар, 1990. - С. 24-36.*